МБОУ «Бюргановская СОШ Буинского муниципального района РТ»

Кил ăшши

(план-конспект открытого урока по родной (чувашской)литературе
в 6 классе в рамках программы повышения квалификации учителей
чувашского языка «Проектирование образовательного процесса на уроках
родного языка и литературы в соответствии с требованиями ФГОС ОО»
13 апреля 2018г.)

Составитель- учительница родного
(чувашского)языка и литературы
высшей квалификационной категории
Вериялова М.М.

Урок теми: Кил ăшши.
Урок тĕсĕ: пĕтĕмлетӳллĕ калаçу тата çыру ĕç урокĕ.
Сапăрлăх тĕллевĕ:
- килте пĕр-пĕрне хисеплесси, пĕр-пĕринпе килĕштерсе чунпа ырă, кăмăлпа ăш-пиллĕ пулмалли пирки асăрхаттарни;
- кил ăшшине чи паха пуянлăхпа танлаштарасси, тăван киле, атте-аннене, асатте-асаннесене, кукамайсемпе кукаçисене юратас, тивĕçлипе мухтанас туйăма аталантарасси.
Пĕлӳ тĕллевĕ:
- текст йĕркисене пĕтĕмĕшле тишкерме, тĕп шухăшне ăнланса илме пулăшасси;
- сăнарсене, вĕсен ĕçне-хĕлне, шухăш-кăмăлне хак пама вĕрентесси.
Аталану тĕллевĕ:
- хайлавсене паянхи кунпа çыхăнтарса пурнăçа ăнланма вĕрентесси;
- ачасан шухăшлавне аталантарасси;
Урок мелĕсемпе меслечĕсем: учитель сăмахĕ, ыйту-хурав, карточкăсемпе ĕçлени, илемлĕ вулав, текста тишкерни, çыхăнуллă текстсене ăнланса илни, шырав ĕçĕ, текстри кирлĕ вырăнсене тупса вулани, текстăн тĕп шухăшне палăртни, проблемăна ушкăнпа сӳтсе явни, пултару ĕçĕ, презентаци слайчĕсемпе ĕçлени, ачасен пĕтĕмлетĕвĕ, учитель пĕтĕмлетĕвĕ.
Пуплеве аталантарасси:
- ятарласа панă ыйтусем тăрăх ачан çыхăнуллă пуплевне аталантарасси;
- пĕтĕмлетӳсем тума вĕрентесси.
Курăмлăх хатĕрĕсем:презентаци, илемлĕ текстсемпе сăвăсем;
Урокра усă курмалли хатĕрсем:
компьютер, мультимедиа проектор, экран, кĕвĕ.
Урок эпиграфĕ:
Килĕшӳ-кил илемĕ.
Ваттисен сăмахĕ.
Урок юхăмĕ
Урок пуçламăшĕнчех жюри членĕсене суйламалла. Ачасен ĕçĕсене тĕрĕслесе паллăсем лартса пыраççĕ, учителе пулăшаççĕ. Вĕсен аллине ачасен списокне памалла. Кашни ĕçпе паллă лартмалли çинчен ăнлантармалла.
(«Çемье гимнĕ» юрă кĕвви хуллен каять.)
I. Учитель кил ăшшипе çыханнă сăвва вулать.

Кăвайтсем нумай-нумай эп курнă.
Чи ăшши — тăван килти вучах.
Ун патне васкатăп хир-хир урлă.
Çав вутра анне ăшши пурах.

Вăл мана вăй панă ачаран.
Вăл каллех хĕмне парать паян.

Эй, аннем, мĕнпе кăна хутмарăн

Тăван çуртăн кив кăмакине!
Армути те, хăмăш та пăрахрăн —
Тытрăн-тытрăнах çурт ăшшине.

Çурчĕ пирĕн пит чаплах та марччĕ,
Çурчĕ йăлт — тăмран та улăмран.
Анчах вăл та тăванран тăванччĕ,
Тĕнчере унран хакли пулман.

Çук, сӳнмерĕ тĕтĕм, хĕм чакмарĕ,
Çук, пĕтмерĕ тăван кил ăшши.
Çав килте тăван-пĕтен юрларĕ,
Савăнчĕ унта кӳрши-арши.

Эпĕр те, вĕт-шакăр, вĕсемпехчĕ,
Эпĕр те вĕреннĕ вĕсенчен.
Кил ăшши пулсассăн тем пекехчĕ,
Йăлт килетчĕ ун йыхравĕнчен.

Кил ăшши пулсан — унта-мĕн юрă,
Кил ăшши пулсан — тăван сăмах.
Кил ăшши... тата мĕн кирлĕ урăх
Çыннăн чунĕ туртăнать ăшшах.

...Кил ăшшин пурах-мĕн пурнăç хĕмĕ.
Кил вучахĕн пур сӳнми çути.
Çав хăват пулать те ĕмĕр-ĕмĕр
Пурнăç пархатарĕ те хевти.

-Ачасем, ку сăвă мĕн пирки пулчĕ?
-Кил ăшши, çемье ăшши пирки.
-Эпир паян урокра «Кил ăшши» пирки калаçăпăр.**(1 слайд)**
Паянхи числона, урок темине çыратпăр –Кил ăшши.
- Ыйту-хурав: Ачасем, мĕн вăл сирĕн шутпа кил ăшши? Эсир ăна мĕнле ăнланатăр?
- Ачасем, кил ăшши пиртен ан тартăр тесен мĕн тумалла?
- Хăвăр пурăнакан вырăнта кил ăшшине мĕнле туятăр?
2.«Кил ăшши» сăмахăн хĕвеллĕ кластерне туни.(2 слайд)
Кил ăшши - сăпка юрри, чун ăшши, анне, юрату, килĕшӳ, атте, чун-чĕре пуянлăхĕ, телей, юрату, ачалăх, кăмака, мăрьерен тухакан тĕтĕм, кукăль, анне пĕçернĕ яшка…

Учитель пĕтĕмлетĕвĕ: Кил ăшшине упраса хăварма пире çамрăксене те, ватти-вĕттине те, хĕрарăмпа арçынна та пĕр япала çеç пулăшма пултарать – пĕрне-пĕри ăнланни. Çемьере пĕр-пĕрне итлени пысăк вырăнта.
Ыйту-хурав:-
3.-Эсир кăçалхи вĕренӳ çулĕнче кил, çемьепе çыхăннă мĕнле калавсемпе паллашрăр? Антип Николаевăн «Юра асламăшĕ», Лидия Саринен «Кукамай», «Валентина Элпин «Илемлĕхе курма пӳрнĕ ача».
А).- Ачасем, чи малтан **Антип Николаевăн «Юра асламăшĕ»** хайлавне илер-ха.. Кунта эпир камăн çемйине паллашатпăр?
-Юрăсен çемйипе.
-Вĕсем миçен пурăнаççĕ?
Вĕсем килĕнче 5 пурăнаççĕ. Юра, асламăшĕ, ашшĕ, амăшĕ, аппăшĕ Настя.
- Çемьере вĕсен килĕшӳ пур-и?
- Çук.
-Мĕншĕн килĕшӳ çук? Мĕн пирки?
Ачасен хуравĕ: Ку çемьере эпир ватă çынна хисеплеменнине куратпăр. Вĕсен килĕнче асламăшне кăшкăркалама пурте хăнăхнă. Ащшĕ çеç сасă хăпартмасть, сивĕ сăмах каламасть. Юлашки вăхăтра асламăшĕ шкула ашшĕ-амăшĕсен пухăвне çӳреме пуçлать. Елена Андреевнăпа туслашса каять. Карчăкăн пурнăçĕ çăмăлах маррине тĕпĕ –йĕрĕпе пĕлет учительница. Елена Андреевна учитель пĕррехинче урокра мухтава тивĕçлĕ пĕр çын çинчен каласа парать. Шăпах ку çын - Юра асламăшĕ пулнă. Уроксем вĕçленсен Юра киле çитет те асламăшĕ çине хăюсăр, хурлăхлăн пăхать, унтан асламăшĕн кăкăрĕ çине пуçне хурса йĕрсе ярать.
4.- Хайлаври сăнарсене хак парăпăр. Учитель карточкăсем валеçет.**(5 слайд)**

1. Сăнарсене хак парăр.

Сăнарсем	Сăнарсенче палăрнă пахалăх
Юра асламăшĕ	**Ырă кăмăллă, тимлĕ, черĕ, ĕçчен, пурне те ăнланать, таса чунлă**
Юра	***Малтан:*** **асламăшне хисеплемест, хăйне пысăка хурать, çын хыççăн каять** ***кайран:*****хăй айăпне туять, тӳрленме шутлать, асламăшĕ пек таса чунлă пулма шутлать**
Юра амăшĕ	**Ялан таçта каскать: е çĕвĕçсен курсне, е темле пухăва, е юрăçсен репетицине**

5. Çак сăмахсене камсем калаççĕ? Йĕрсемпе çыхăнтар.

« Кайса лар шкула. Мăнуку пирки мĕн каланине итле.»	Юра
«Пĕлетĕр-и эсир çав таса та уçă чунлă çынна?»	Юра амăшĕ
«Эх, çак ватсупнăна, пĕрех мана пĕчĕк ача выранне хурать.»	Елена Андреевна

Кам вăл Елена Андреевна?
Елена Андреевна –учитель,ваттисене хисеплет, çамрăксене тĕрĕс çул çине тăма пулăшать, вĕренекенсен чунне витĕр курать. Вăл пулăшнипе Юрăсен килĕнче ватă асламăшне хисеплеме тытăнчĕç.

Учитель пĕтĕмлетĕвĕ: Камăн килĕнче юрату, ăнлану пур, хирĕçӳ çук - çав çемье телейлĕ. Кил ăшши пĕр-пĕрне ăнланнинче, хисепленинче, тĕллевпе шухăш-кăмăл пĕр килнинче никĕсленет. Çемьере «манăн» «санăн» пулмалла мар, пĕри –хуçа, тепри тарçă пулас çук. Пур ĕçе те килĕштерсе тумалла. **Шăпах, ачасем, Юра асламăшĕ –пирĕншĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать.**

6.Юрă «Кукамай» каять.(Кану саманчĕ туса илни.)
-Ачасем, ку юрă кам çинчен?
-Кукамай.
7.Аса илер-ха **Лидия Саринен «Кукамай»** калавне.
Автор хайлава мĕншĕн «Кукамай» тесе ят панă-ши?
-Ку калавра кукамай сăнарĕ мĕншĕн асра юлмалли сăнар?
Тольăн кукамăшĕ ырă çын, кăмăллă, хаклă. Ырă сăнар пулнине эпир Толя тунă йăнăшсем урлă куратпăр.

-Ачасем, атьăр-ха Тольăн ача чухнехи айăпĕсене аса илетпĕр. Кам каласшăн?
Ачасем каласа тухаççĕ. (Шушкă çисе яни, турăх тăкса яни, пекĕ вăрласа кайса çухатни.)
8.Халĕ Тольăпа Анатолий Михайлович сăнарĕсене хакласа таблица тултарăпăр.**(6 слайд)**

Толя	**Анатолий Михайлович**
Кукамăш умĕнче йăнăшсем тăвать, тӳрлетме шутламасть.	Çĕпĕрте пурăнать, çемьеллĕ, кукамăшĕнчен каçару ыйтать

-Айăпа кĕтĕн-и, çынна кӳрентертĕн-и - йăнăша асăрхаса тӳрлетме пĕлни кирек кама та питĕ кирлĕ. Мĕнле майпа тӳрлетме пулать-ха йăнăша?
Ачасен хуравĕ: Каçару ыйтма, ырă ĕçпе тавăрма пулать. Анатолий Михайлович çакна чылай çул иртсен тин ăнланса илнĕ. Ырă та ăслă ватă çын ăшши Тольăна йĕркеллĕ çын пулма пулăшнă.

9.- Эсир айăпа кĕрсен каçару мĕнле ыйтатăр?(Ачасем калаççĕ.)
Каçару ыйтмалли сăмахсенчен хăвăра килĕшнĕ виççĕшне тетрадь çине çырса хурăр.**(7 слайд)**
*Каçар мана тархасшăн…
*Ÿкĕнетĕп…
*Мана хытах ан кӳренсем…
*Чĕререн каçару ыйтатăп…
*Тархасшăн мана ан айăплăр…
*Эпĕ Сирĕн умăрта айăплă, мĕншĕн тесен…
*Сирĕнтен каçару ыйтма ирĕк парсамăр…
*Каçарма ыйтатăп :мĕншĕн тесен…
*Эпĕ хам сăмахсемшĕн каçару ыйтатăп…

10.-Ачасем, мĕн вăл синквейн?**(8,9, 10слайдсем)**
Кукамай сăнарĕ пирки синквейн мелĕпе сăвă çырса пăхăпăр.

Кукамай.
Хаклă, сăпайлă,
Ачашлать, ăс парать, вĕрентет
Кукамай сăпайлă пулма вĕрентет
Хаклă çын.

11.-Ачасем, аса илĕр-ха тархасшăн, Жанна, упăте, «Хăюллă хĕрлĕ армеец»,
« Тăмана», «Чăпăркка» мĕнле хайлавра тĕл пулаççĕ?
-Валентина Элпин «Илемлĕхе курма пӳрнĕ ача» хайлавра.
-Маттур, ачасем.
- Валентина Элпи мĕншĕн калава «Илемлĕхе курма пӳрнĕ ача» тесе ят панă?
-Ачасем, ку хайлавра пире Валентина Элпи мĕнле çемьепе паллаштарать?
(Ачасен хуравĕ:)Кунта эпир Энтьук çемйипе паллашатпăр. Энтьуксем çемьере виççĕн пурăнаççĕ. Камсем-ха вĕсем?
-Энтьук асламăшĕ, Энтьук, Укçине аппа (Энтьук амăшĕ).
-Ачасем, Энтьук мĕнле ача?
Эньтук - ытти ачасем курман илеме курма пултаракан ача.
12.Карточкăсемпе ĕçлени.

Ача амăшĕ	Асламăшĕ
Пĕчĕк Эньтука амăшĕ ăнланасшăн мар, унăн Тымар Энтьукĕн амăшĕ пулас килмест. Вăл Энтьука хăйĕн юратнă ĕçĕпе аппаланма та чарасшăн.	ырă кăмăллă, ачасен кăмăлне туйма пултаракан, ватă пулсан та илемлĕхе курма пултаракан çын.Ачана хăйĕн юратнă ĕçĕпе аппаланма хавхалантарать асламăшĕ, ачасем ăнланманнипе кулнишĕн хуçăлмалла мар тесе вĕрентет.

Вĕçлесен пĕр ача вуласа парать. Ĕçсене жюри членĕсем тĕрĕслеççĕ.
-Ачасем, çулсем иртсен Энтьук мĕнле çын пулать-ши?
Ачасем хăйсен шухăшĕсене каласа параççĕ.

-**Учитель пĕтĕмлетĕвĕ:**Ачана тĕрĕс воспитани парас ĕçре чи малти вырăнта яланах çемье пулнă та, пулмалла та. Çемьере ачана , çамрăка ырă ăс параканни вара – яланах ватă çын пулнă.

13.Ваттисен сăмахĕсем тупни.

-Ватă çын ăсĕ- тăвата çын ăсĕ;
-Ваттин вĕрентес пулать, çамрăккин итлес пулать;
- Ватти сывă чух, çамрăка хуйхă çук,»- тесе ăс панă.

Ватă çын-асанне-и вăл, асатте-и, кукамай-и, кукаçи-и,кÿршĕри кинемейпе мучи-и-ачан пурнăçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнать.Чăваш ачи яланах ватă çын хÿттинче çитĕнет.Унăн сывăх çынни,ăна ăнланаканни,ăс параканни каллех ватă çын.

14.- Ачасем, малалла эпир ÿкерчĕкпе ĕçлĕпĕр. Ку ÿкерчĕке **Богдяжсем ÿкернĕ. Вăл «Туслă çемье»** ятлă.
- Мĕншĕн ку ÿкерчĕке «Туслă çемье» тесе ят панă-ши? Кунта камсене куратпăр?
- Кунта пĕр çемьене сăнласа кăтартса панă.
- Мĕн ĕçлеççĕ вĕсем?(Ачасем ÿкерчĕке пăхса сăнласа каласа параççĕ.)

15.Ÿкерчĕке пăхса япала ячĕ, паллă ячĕ, глаголсем 10-шар çырăр.

Япала ячĕсем	Паллă ячĕсем	Глаголсем
Кил,çемье,асатте,асанне, атте,анне,аппа,арçын ача тата ыт те.	Сарă, шурă, хĕрлĕ, ăшă…	Лараççĕ, вулать, сыхать, хатĕрлеççĕ, итлет, юсать, кустарать…

-

-Ачасем, художник ӳкерчĕкпе ĕçленĕ чухне мĕн тĕслĕ сăрăсемпе усă курнă?
Ачасен хуравĕ: шурă, хĕрлĕ, сарă, симĕс
16.Кашни тĕс мĕнепĕлтерет?
Шурă – тасалăх, тĕрĕслĕх, чăнлăх;
Хĕрлĕ – юрату, савăнăç, хитрелĕх;
Сарă - çутă, хаваслăх, ăшă туйăм;
Симĕс - çителĕклĕх, аталану;
- Çапла, ачасем, художниксем те хăйсен ĕçĕсенче тĕссемпе пĕлсе сăнарсене уçса параççĕ. Кашни тĕсĕн хăйĕн пĕлтерĕшĕ. Апла пулсассăн, ку ӳкерчĕкри çемьере тасалăх, юрату, ăшă туйăм, аталану палăрать.

17. Рефлекси. Творчествăлла вăйă «Микрофон»:
- Йĕркеллĕ çемьен мĕнле пулмалла-ши, ачасем?
Ачасен хуравĕсем: Лайăх – ĕçчен – çепĕç – пĕр-пĕрне хисеплемелле – пĕр-пĕрин шухăшĕсене хисеплемелле – панă сăмаха тытмалла – пĕр-пĕрне хирĕçле юрату памалла – сивĕ сăмахсем каласа чун-чĕрене ыраттармалла мар – пĕр-пĕрне ăнланмалла – хисеп тумалла – пулăшу памалла-каçару ыйтмалла,каçармалла

18.Экран çине çурт ӳкерчĕкĕ тухать. Ун çине «Кил ăшши»,- тесе çырнă.Ачасен палăртнă сас паллисемпе ваттисен сăмахĕсем аса илмелле.
Килĕшӳ - кил илемĕ.
Илемлĕ арăм пăхса савăнма, ăсли ĕмĕр пурăнма.
Лайăх çемьере тăнăçлăх пур.
Ĕмĕр пĕр-пĕрне юратса, ăнланса, хисеплесе пурăннине мĕн çиттĕр.
Шыв юххи пек пурăннине мĕн çиттĕр.
Ӳркев çемьене пăсать.
19. Килти ĕç (суйласа илмелле).
- 1. «Туслă çемье»ӳкерчĕк тăрăх калав çырăр.
- 2. «Çемье» темăпа сăвă çырăр.

3 «Туслă çемье»темăпа синквейн тăвăр.

20. Ачасен пĕлĕвне хаклани: жюри членĕсем шутласа хунă хут тăрăх ачасене паллăсене пĕлтерни.

21.-Халĕ вара урока эпир сирĕнпе пĕр çемьен видеороликĕпе вĕçлĕпĕр.